25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ДЕКАБРЬ
13
ВЫРСАРНИКУН
289(6224) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

МУСКАВ, ЦК ВКП(б), СТАЛИН ЮЛТАША

Сирĕн, Сталин юлташ, историлле докладла тата приказпа хавхаланса, Саратов облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем Сталинград фронтне парнелемешкĕн боевой самолетсем тума хăйсен перекетлесе хăварнă укçисенчен 33.500.000 тенкĕ пухса пачĕç.

Укçа пухас ĕç малалла ăнăçлăн пулса пырать, вăл Саратов облаçĕнчи колхозниксем пирĕн Тăван çĕршыва вĕçĕмсĕр юратса ăна пĕтĕм чунтан парăнса тăнине, нимĕç захватчикĕсемпе çапăçма пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшса тăнине питĕ уççăн кăтартса парать.

ВКП(б) Саратов Обкомĕн секретарĕ КОМАРОВ.

САРАТОВ, ВКП(б) ОБКОМĔН СЕКРЕТАРЬНЕ КОМАРОВ ЮЛТАША

Саратов облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене манран тăванла салам калăр тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тăвăр.

И. СТАЛИН.

Шкул ачисене çар ĕçне кăтартуллăн вĕрентессишĕн

ССР Союзĕн Совнаркомĕ кăçал октябрь уйăхĕнче «Пуçламăш, тулли мар вăтам тата вăтам шкулсен I—IV-мĕш класĕсенче вĕренекенсене çар ĕçне пуçламăш пĕлÿ парасси, вăтам шкулсен V—X-мĕш класĕсенче тата техникумсенче вĕренекенсене призывччен çар ĕçне вĕрентес хатĕрлесси çинчен» постановлени йышăннă. Çар ĕçне вĕрентессине шкул ачисене воспитани парас ĕçĕн тата пĕтĕм вĕрентÿ ĕçĕн системине кĕртнĕ. Çак ĕçе ССР Оборона Халăх Комиссариачĕ хатĕрлесе çирĕплетнĕ программăсем тăрăх туса пымалла.

Ку постановлени шкул ачисене çар ĕçне кăтартуллăн вĕрентме лайăх условисем туса парать. Шкулсенче военрукпа çар ĕçне вĕрентекен учительсен штачĕ туннă, вĕсене ĕçуки тÿлесси уçнă.

[illegible]

çар ĕçне вĕрентекен кадрсене тупса парасси ытти хăшпĕр районсенче те çителĕксĕр пулса пырать.

[illegible]

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 11-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 11-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра малтанхи еннеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

Декабрĕн 10-мĕшĕнче Сталинград районĕнче противникăн 60 транспортнăй самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Декабрĕн 10-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине çитти пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 7 батарейине пусарса лартнă, 2 поезда çĕмĕрнĕ, боеприпассен 2 складне тата горючи складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине икĕ батальон таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн чаçсем противник çине перcе тăнă тата унăн дзочĕсемпе блиндажĕсене ишĕлтерсе пынă. Хулан кăнтăр хĕрринче Черненко юлташ командир пулса тăракан подразделенин боецĕсем тăшманăн 6 дзотне çавăрса илнĕ те унта тăнă гитлеровецсене, хирĕç тăнăскерсене, вĕлерсе пĕтернĕ. Кун каçа тĕрлĕ участоксенче нимĕçсен 2 танкне перcе çĕмĕрнĕ, 34 дзотпа блиндажа пĕтерсе тăкнă тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна çити вĕлернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, Дон шывĕн сулахай хĕрринче, пирĕн чаçсем противникăн контратакисене сире-сире янă тата унăн позицийĕсене разведка туса сăнанă. Чистяков юлташ ертсе пыракан боецсем тăшманăн 5 контратакине сирсе янă, нимĕçсене хăйсен малтанхи рубежĕсем патне хăваласа янă. Çав çапăçура противникăн пехоти икĕ рота таран пĕтнĕ тата çапăçу хирĕнче унăн перcе çĕмĕрнĕ 3 танкĕпе çунтарса янă 2 танкĕ ларса юлнă. Тепĕр участокра гитлеровецсем пирĕн позицисене 7 танкпа 10 бронемашина пулăшса пынипе атакăланă. Пирĕн артиллери пĕр бронемашинăна тата тапăнса пынă танксене 7-шне те пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсен вăйĕсен пĕр пайĕпе активлă операцисем туса пынă, ытти участоксенче вĕсем противникăн разведка тăвакан отрячĕсене сире-сире янă. Н-ски чаçăн артиллеристчĕсем артиллерин темиçе батарейине пусарса лартнă тата противникăн пĕр çĕре пухăнса тăнă пехотине сапаласа янă, унăн пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн пĕр стрелковăй чаçăн боецĕсем нимĕçсем тăракан вырăна вăркăнса кĕрсе кайнă та хаяррăн çапăçса тăшманăн 180 салтакĕпе офицерне вĕлерсе тăкнă тата 2 оруди, 9 пулемет, 7 миномет, 13 автомашина тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн чаçсем хăйсем йышăннă рубежсене тĕреклетнĕ, çав чаçсен пĕр пайĕ противникăн пехотипе тата танкĕсемпе çапăçнă. Ржев районĕнче Саломатин юлташ ертсе пыракан часть нимĕç пехотин темиçе контратакине сирсе янă. Противника халран ярсан, пирĕн боецсем ăна атакăланă та унăн темиçе опорнăй пунктне йышăнса илнĕ. Çав çапăçура нимĕçсен темиçе çĕр салтакĕпе офицерĕ вилнĕ. Противникăн 21 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Великие Луки районĕнче Маслов юлташ командир пулса тăракан чаçăн подразделенийĕсем хаяррăн çапăçнă хыççăн тактика тĕлĕшĕнчен паха пулса тăракан пĕр высотăна йышăннă. Нимĕçсем темиçе хут та контратака тунă, анчах вăл контратакăсем ăнăçман, противник çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тÿснĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем 3 кун хушшинче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллери 24 дзотпа блиндажа ишĕлтернĕ, противникăн 2 орудине, 8 пулеметне тата боеприпассен складне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр Кавказра кĕрешекен партизансен отрячĕ противникпа çапăçса нимĕçсен 90 салтакĕпе 6 офицерне вĕлернĕ. Пĕр çăмăл тата грузовой автомашинăна, 3 мотоцикла пĕтерсе тăкнă, телефонпа телеграф çыхăнăвĕн линине 8 километр тăршшĕ пăсса хунă. Тепĕр отрядри партизансем противникăн поездне ÿпĕнтерсе янă, çав поездра 50 вагон тата 2 платформа пулнă.

* * *

Сталинград облаçĕнчи Латошанка ялĕнче, халĕ нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнăскерте, пурăнакан çынсем гитлерла ирсĕрсем тискер ĕçсем туни çинчен акт çырнă. Çав актра çапла каланă: «Нимĕçсем ялти çынсене пĕр сĕвем çип хăвармиччен çаратса тухрĕç, пиртен пĕтĕм продовольствие, тумтирсене, çав шутра çăматăсене, кĕрĕк пиншаксене тата ытти япаласене те туртса илчĕç. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем çуртсене çĕмĕре-çĕмĕре кĕретчĕç те кăç айне пулнине пурне те илсе тухатчĕç. Гитлеровецсем ирĕксĕрлесе 95 çынна, çав шутра Татьяна Компаненковăна тата унăн 7 ачине тыла хăваласа кайрĕç. Икĕ хĕре фашистла ирсĕрсем офицерсем валли тунă нимĕç çуртне илсе кайрĕç». Акта çаксем алă пуснă: Екатерина Мамонтова, Таисия Трегубова, Евдокия Холтенко, Тамара Уланова тата Анастасия Макарова.

* * *

Грецири партизансем Салоникипе Афины хушшинчи чугунçул çинчи кĕпере сирпĕнтерсе янă. Çав çулпа куллен итальянецсемпе нимĕçсен темиçе çар эшелонĕ ирте-ирте каятчĕç. Халĕ çав участокра поездсем çÿреме чарăннă.

Декабрĕн 12-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Сталинград хулин заводсем вырнаçнă пайĕнче Горохов юлташ ертсе пыракан подразделенисем нимĕçсене тĕреклетнĕ темиçе позициpен хăваласа кăларнă. Заводсен районĕнче пирĕн боецсем тăшманăн 7 блиндажне йышăнса илнĕ тата гитлеровецсене пĕр рота ытла вĕлерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене тĕреклетнĕ, уйрăм участоксенче наступленилле çапăçусем туса пынă. Н-ски чаçăн подразделенийĕсем, минăсем хурса тухнă тата пралук карнă вырăнсем урлă каçса, тăшманăн оборонин тĕреклетнĕ узелне кĕрсе кайнă та 300 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă, 8 оруди, 16 пулемет, 11 миномет, 10 противотанковăй пăшал, 37 автомат, радиостанци, боеприпассен складне тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра нимĕç пехотин пĕр батальонĕ танксем пулăшса пынипе пирĕн позицисене атакăланă. Н-ски чаçăн боецĕсем тăшмана çывăха янă та вĕсем çине темиçе хут харăс перcе янă. Противникăн 200 çынни ытла вилсен тата 3 танкĕ çĕмĕрĕлсен вăл каялла чакнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен хĕçпăшалĕсене нумай пухса илнĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн боецсем тăшманăн кавалери эскадронне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра противникăн пĕр батальон пехотипе 13 танкĕ пирĕн опорнăй пункта атакăланă. Н-ски чаçăн боецĕсем гитлеровецсен çав атакине сирсе янă. Çапăçура нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна çити пĕтерсе тăкнă тата противникăн 3 танкне перcе çĕмĕрнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем хăйсем йышăннă позицисене тĕреклетнĕ, уйрăм участоксенче наступлени тунă. Ржевран хĕвеланăçнерехре Н-ски соединенин боецĕсем артиллерипе минометсен вут-çулăмĕпе хÿтĕленсе пырса юханшыв урлă каçнă та хаяррăн çапăçнă хыççăн противникăн траншейисен пĕрремĕш линине йышăнса илнĕ. Нимĕçсен 15 блиндажне тата 18 дзотне пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 800 çити салтакĕпе офицерĕ вилнĕ.

Великие Луки районĕнче пирĕн чаçсем тăшманăн контратакине сирсе янă тата çавăрса илнĕ нимĕç гарнизонĕсене пĕтерессишĕн çапăçнă.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 7 самолетне перcе ÿкернĕ.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем вырăнти çапăçусем туса пынă. Пĕр участокра противник пирĕн оборона ăшне савăлланса кĕме хăтланнă, анчах, та çапла хăтланни унăн ăнăçман. Пирĕн боецсем хирĕç пырса çапса гитлеровецсене каялла хăваласа янă, нимĕçсен 160 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ противникăн 5 поездне крушени тунă. 5 паровоз тата чĕрĕ вăй, танксем, орудисем турттарса пыракан 97 вагонпа платформа çĕмĕрĕлнĕ. Пĕр крушени вăхăтĕнчех 600 салтакпа офицер таран вилнĕ.

* * *

Совет Информаци бюровĕ ноябрĕн 17-мĕшĕнче Германин ютçĕршыв ĕçĕсен министерствин особăй назначени батальонĕн 4-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ обер-штурмфюрерăн Норман Ферстерăн заявленине пичетлесе кăларнăччĕ. Çав документра çакна пурте ĕненмелле кăтартса панăччĕ: «Совет Союзĕн оккупациленĕ районĕсенче пур çĕрте те тăвакан çаратусем вĕсем Германи правительстви тÿрремĕнех хушнă тăрăх пулса пыраççĕ, вĕсене государство хăй организованно туса пырать». Ферстерăн заявленине Совет пичетĕнче çеç мар, Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи, Англири тата нейтральнăй çĕршывсенчи нумай хаçатсенче те пичетлесе кăларнă. Гитлеровецсем, çийĕнчех тытса стена çумне хĕстерсе лартнăскерсем, хăйсене айăплакан çав документ çинчен пĕр сăмах та каламасăр ирттерсе янă. Халь тин, Ферстерăн заявленине пичетлесе кăларни уйăха яхăн иртсен тин вĕсем хăйсене тÿрре кăларма тата хăйсен йĕрĕсене шăлса хума хăтланаççĕ. Совет Союзĕн культура пуянлăхĕсене çаратни государство хăй организованно туса пыракан ĕç пулса тăрать тенине Германин информаци бюровĕ декабрĕн 8-мĕшĕнче сирсе яма хăтланнă. Берлинăн вăрă-хурахла притонĕнчи çыравçăсем, вăхăтлăха оккупациленĕ совет районĕсенчен çаратса пухнă пуянлăхсен склачĕсемпе юнашар вырнаçнă çав притонри çыравçăсем çапла пакăлтатаççĕ: «Совет Информаци бюровĕ калани тĕрĕс маррине акă çакă пурне те ĕнентермелле кăтартса парать: Розенбергăн штабĕ Новгород таврашĕнчи чиркÿсенче усраннă тĕрлĕ библисене, тĕрлĕ алçырăвĕсене тата кĕнекесене пĕтесрен сыхласа хăварнă», теççĕ. Çак «сирсе яни» вăл хăшпĕр чухне йышăнниччен те хаклăрах пулса тăрать. Гитлеровецсем калас мар тенĕ çĕртех каласа янă. Куллен калакан суя сăмахсем хушшине темиçе тĕрĕс сăмах лекнĕ. Ферстерăн заявленийĕнче Розенберг штабĕ тĕрлĕ хаклă алçырăвĕсене тата аваллăх памятникĕсене çаратать тесе каласа панине Германин информаци бюровĕ пăртак кая юлса тĕрĕсе кăларать. Чăн та ĕнтĕ, çаратакансем çапла калаççĕ: «Эпир» «пуянлăхсене çăлса хăваратпăр», теççĕ. Анчах та вăрăсен çавăн пек ĕçне «пуянлăхсене çăлса хăварни» тесе ят парсан, çаратни тесе мĕне каламалла пулать-ши вара?

Фашистла çаратусем пĕтĕмпех çухалса кайнă. Халĕ çакă паллă: нимĕç правительстви çумĕнчи специальнăй командăсем вăрă-хурахла ĕç туса тăни çинчен Ферстер каласа панине халĕ Германин информаци бюровĕ официальнăй йĕркепе çирĕплетсе пачĕ.

Тамбов тата Саратов облаçĕсенчи колхозниксенчен пример илер!

Танксен колоннисене тума укçа пухас ĕç мĕнле пырать

Сталин юлташăн сăмахĕсемпе хавхаланса, пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем те танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» колоннисене тума укçа пухас ĕçе вăйлатрĕç. Декабрĕн 10-мĕшĕ тĕлне республикăри колхозниксемпе колхозницăсенчен танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 5 миллион тенкĕ ытла, танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 1.095.000 тенкĕ укçа пухса государство банкне хывнă.

Танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума укçа пухас тĕлĕшпе Вăрнар районĕ малта пырать. Вăл çак ĕç валли декабрĕн 12-мĕшĕ тĕлне 1.005.000 тенкĕ укçа пухса банка хывнă. Ун хыççăн Чкаловски, Улатăр, Шăхасан тата Канаш районĕсем малта пыраççĕ. Чкаловски район декабрĕн 10-мĕшĕ тĕлне çак ĕç валли 622.000 тенкĕ, Шăхасан районĕ 256.000 тенкĕ, Улатăр районĕ 332.000 тенкĕ пухнă.

Танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума укçа пухас ĕç Первомайски, Пăрачкав, Октябрьски, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне районĕсенче малтанхи пекех сÿрĕккĕн пулса пырать. Асăннă районĕсен руководителĕсем, ку ĕç хăй тĕллĕн пуласса шанса пурăннăскерсем, колхозниксене фронта пулăшма тивĕçлипе мобилизацилемен. Вĕсем Сталин юлташăн историллĕ доклачĕсене тата приказĕсене ăнлантарса парассине фронта пулăшас ыйтупа çыхăнтарман. Сталин юлташăн тата Хĕрлĕ Çарăн тавне тивĕç пулнă Тамбов облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсен пуçарăвне колхозниксем патне çитермен.

Вăрнарсенчен пример илсе, республикăри мĕнпур районсен танксен колоннисене тума укçа пухас ĕçе вăйлатмалла.

Спиридонов юлташ бригадинчен пример илĕр

ЕЛЧĔК, декабрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС-ри трактористсемпе комбайнерсем танксен «Тракторист Чувашии» ятлă колоннине тума паянхи кун тĕлне 55.300 тенкĕ укçа пухнă. Тракторсен 17-мĕш номерлĕ бригади çак ĕç валли 11.000 тенкĕ укçа пухса панă. Трактор бригадин бригадирĕ Спиридонов юлташ хăй 2.200 тенкĕ, унăн помощникĕ Абдулкин—1.100 тенкĕ, трактористкăсем А. Гордеева—1.500 тенкĕ, Е. Денисова—1.000 тенкĕ, тракторист Сидоров юлташ — 1.500 тенкĕ панă.

Çак ĕç валли 8-мĕш трактор бригадите (бригадирĕ Марков) 10.000 тенкĕ пухнă.

Г. МИХЕЕВ,
МТС политотделĕн начальникĕ.

Вăрнар районĕ пĕр миллион тенкĕ ытла пухнă.

ВĂРНАР, декабрĕн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталин юлташ Тамбов облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене танксен «Тамбовский колхозник» ятлă колоннине тума 40.000.000 тенкĕ укçа пухнăшăн тав туса саламланине сÿтсе-явнă хыççăн районри ĕççыннисем фронта пулăшас ĕçе вăйлатрĕç. Тамбов облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсен пуçарăвне тата Сталин юлташăн çырупе колхозниксен аслă пухăвĕсенче пысăк çĕкленÿпе сÿтсе-яваççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем, вăл пухусенче тухса каласа, фронта пулăшас ĕçе вăйлатма сăмах параççĕ. Ноябрĕн 11-мĕшĕпе 12-мĕшĕнче районри колхозниксемпе колхозницăсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 865.000 тенкĕ укçа пухнă. Çапла вара çак ĕç валли паянхи кун тĕлне пĕтĕмпе 1.005.000 тенкĕ укçа пухса банка хывнă. Республикăра танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тăвас ĕçе пуçарнă Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 125.000 тенкĕ хывнă. Çавăн пекех Урвăшри «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз членĕсем 76.000 тенкĕ, Сендимиркинăри колхозра 53.000 тенкĕ, Хурнсурти Чапаев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 50.000 тенкĕ, Хирпуçĕнчи «Победа» колхоз членĕсем 46.000 тенкĕ пухнă. Ку ĕç ытти колхозсенче те пысăк çĕкленÿпе пулса пырать.

Е. ВОЛКОВ.

Çичĕ колхоз укçа пухас ĕçе хутшăнман

СОВЕТСКОЕ. Районри колхозсенче танксен колоннисене тума укçа пухас ĕç начар пулса пырать. Декабрĕн 12-мĕшĕ тĕлне çак ĕç валли пурĕ те 130.000 тенкĕ çеç пухнă. Хурамалти Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 10.250 тенкĕ, Сталин ячĕпе тăракан, «Коминтерн» колхозсен членĕсем—9.000-шар тенкĕ пухнă. Вĕсене ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Никитин юлташ ку ĕçе лайăх организацилене колхозсен шутне кĕртет. Ытти колхозсенче вара ку ĕç япăх пулса пырать. Танксен колоннине тума укçа пухас ĕçе колхозниксене çеç явăçтарнă, колхозсем вара ку ĕçе хутшăнман. Районра 87 колхоз. Вĕсенчен 7-шĕнче танксен колоннине тума колхозниксем укçа пухман.

Танксен колоннине тума укçа пухас ĕçе ВКП(б) Советски райкомĕ хăçан тивĕçлипе ертсе пыма тытăнĕ?

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре противник темиçе хутчен хаяррăн контратака тунă. Нимĕçсем юлашки çапăçусенче çухатнă позицийĕсене каялла тытса илес тесе питех те тăрăшаççĕ. Анчах та вĕсем тăрăшни ăнăçмасть. Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем противникăн чĕрĕ вăйĕпе техникине хастарлăн пĕтерсе пыраççĕ.

Пĕр участокра темиçе хутчен вăйлăн контратакăсем тунă хыççăн гитлеровецсем, пирĕн подразделенисем пыра-пыра çапнипе халран кайнăскерсем, оборонăна куçнă. Анчах та пирĕн боецсем противника канма памасăр вăйлăн пырса çапса, ăна каялла хăваласа янă. Тăшман пысăк çухатусем тўснĕ. Çав çапăçура нимĕçсен темиçе танкне персе çĕмĕрнĕ тата çунтарса янă.

Темиçе выранта пирĕн войскăсем çапăçса пырса разведка тунă. Пирĕн пĕр стрелковăй подразделени, артиллерин вут-çулăмĕпе хўтĕленсе, нимĕçсем тунă чăрмавсем урлă каçнă та противникăн позицийĕсене атакăланă. Пехотинецсене танкистсем хытă пулăшнă. Вĕсем тăшманăн пулемечĕсемпе орудийĕсене пусарнă.

Çакăн хыççăн пирĕн боецсем нимĕçсен траншейисем патне çывăхарнă та вĕсем çине гранатăсем вăркăнтарнă. Çапăçура 100 гитлеровеца çити вĕлернĕ, 6 пулемета тата пĕр орудие пĕтерсе тăкнă.

Кўршĕри участокра хĕрўллĕ çапăçу пулса иртнĕ. Çĕрлехи тĕттĕмпе усă курса, пирĕн боецсем нимĕçсем йышăннă высота патне, тактика енчен меллĕ высота пулса тăраканскер патне, пырса çитнĕ. Ку задачăна пехотинецсем хăйсене ятарласа хушса панă орудисемпе тата минометсемпе çыхăнса çапăçса пурнăçланă. Артиллеристсемпе минометчиксем тупăсемпе минометсен çулăмĕсем тăрăх вĕсем ăçта вырнаçса тăнине пĕлнĕ те вĕсене тĕл персе пусара-пусара лартнă. Унтан совет пехотинецĕсем нимĕç окопĕсене çĕмĕрсе кĕрсе кайса, тăшманăн 7 пулеметнăй йăвине тата темиçе орудине пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 170 вилли таран выртса юлнă.

Тренировкăсем пуçланчĕç

ИШЛЕЙ. Ишекри вăтам шкулта вĕренекенсемпе комсомолецсем йĕлтĕр çине тăрса тренировкăсем ирттерме пуçларĕç. Физкультура преподавателĕ Кузнецов юлташ ку ĕçре аван ертсе пырать.

Шкулта йĕлтĕрçĕсен икĕ командипе организациленĕ. Декабрĕн 3-мĕшĕ тĕлне колхозниксем 20 мăшăр, шкул ачисем 44 мăшăр йĕлтĕр хатĕрленĕ. Пулас йĕлтĕрçĕсене медкомисси витĕр кăларнă. Кунта кашни çамрăк, кашни комсомолец йĕлтĕр çинче çўреме тата йĕлтĕр çинче çапăçма пĕлмеллине тата чăтăмлă та патвар шăмшаклă пулмаллине шута илсе, кашни икĕ кунрах походсем туса ирттереççĕ.

И. ГРИГОРЬЕВ.

НИМĔÇСЕНЕ МУСКАВ ПАТĔНЧЕ АРКАТСА ТĂКНĂРАНПА ÇУЛТАЛĂК ТУЛНĂ ТĔЛЕ. Çулталăк каярах Хĕрлĕ Çар Мускав патĕнче питех те хаяррăн çапăçса нимĕçсен фашистла войскисене аркатса тăкрĕ тата вĕсене столицăран аяккалла хăваласа ячĕ.

Укерчĕк çинче: Мускав нимĕç фашисчĕсем наступлени тунă кунсенче. Су лахайран сылтăмалла: Кировски воротăсем патĕнчи баррикадăсем, Москворецки районри рабочисем хăйсен тăван хулине хўтĕлеме тунă хĕçпăшаллă отрядĕнчи боецсем.

Л. ДОРЕНСКИПЕ В. МАЛЫШЕВĂН фотоўкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Авăн çапас ĕçе халех вĕçлемелле

СĔНТĔР, декабрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталин юлташăн ноябрĕн 6-мĕшĕнчи доклачĕпе паллашнă хыççăн, колхозниксем ĕçе хăвăртрах туса пыма пуçларĕç. Авăн çапас ĕçе «Майăн 1-мĕшĕ», «Красный Октябрь» колхозсем лайăх организацилерĕç. Вĕсем авăна хăвăрт çапса пуçтарчĕç.

Районри колхозсен тата 565 гектар çинчи тырра çапмалла. Нумай колхозсен çапмалли тырă 2—8-шар гектар çеç. Тĕслĕхрен, «Парижская Коммуна», «Ударник», «Крестьянин», Сталин ячĕпе тăракан, «Будильник» тата «Волга» колхозсем тырпулсене ыран-паянах çапса пĕтереççĕ. Анчах «Новый путь», «Заря» тата ытти хăшпĕр колхозсенче авăн çапас ĕç халĕ те чăтма çук япăх пулса пырать-ха. «Новый путь» колхозăн çапман тырпул татах 100 гектар ытла. «Заря» колхозăн 90 гектар, Фрунзе ячĕпе тăракан колхозăн 50 гектар. Ку колхозсен руководителĕсем ĕçри ответлăха туймаççĕ. Кунта ĕçе ир тухмаççĕ, молотилкăсемпе туллин усă курма тăрăшмаççĕ. «Аврора» колхоз (председателĕ Матвеев) юлашки вунă кун хушшинче мĕнпурĕ те 10 гектар тыррине çеç çапса илнĕ.

МТС хăйĕн машинисемпе авăн çапас ĕçе япăх организацилерĕ. Калас пулать, МТС руководителĕсем юлашки вăхăтра колхозсене авăн çапма пулăшассишĕн пачах тăрăшмаççĕ. Механиксене пурне те ремонт ĕçне чĕнсе илнипе вĕсем колхозсенчи молотилкăсен ĕçĕпе пачах интересленме пăрахнă. МТС-ăн 20 сложнăй молотилка, вĕсенчен халь колхозсенче 11-шĕ çеç ĕçлеççĕ, вĕсем те нормăпа 12-шер тонна тырă çапас вырăнне сменăра 7—8-шар тонна çеç çапса кăлараççĕ.

Фрунзе ячĕпе тăракан колхозăн итемĕ МТС-ран 200 метрта çеç. Унта ĕçлекен сложнăй молотилка 3 кун хушши ĕнтĕ ĕçлемесĕр ларать. Молотилка ваннă, ăна юсаса ĕçе яма май пур, анчах МТС механикĕсем çакăнта та тухса курмаççĕ. Авăн çапас ĕç районра чарăнса тăни нумай енчен МТС хăйĕн молотилкисене кирлĕ пек ĕçлеттерменнинчен килет. Механиксене гаража чĕнсе илсе, молотилкăсене йăлтах машиноведсемпе бригадирсен аллине панă, вĕсен техникăллă юсавлăхне пăхса тăма пăрахнă.

Машинăсене пăхма пĕлменнипе тата вĕсене асăрхаманнипе Киров ячĕпе тăракан колхозра машинăн подшипникĕ ирĕлсе кайнă. «Идея» колхозра молотилкăна ытлашши хытарса лартнă пирки икĕ эрне ĕнтĕ унпа ĕçлеймеççĕ. «Краснофлотец» колхозра машинăн подшипникĕ, «Пахарь» колхозра карбюраторĕ ванса кайнă.

Районри колхозсем декабрĕн малтанхи вунă кунĕнче хатĕрлев пунктне 297 тонна тырă леçнĕ. Колхозсем государствăна тырă парса татассишĕн пĕр-пĕрине пулăшса ĕçлеççĕ. Киров ячĕпе тăракан колхоза «Быстрый», «Новая жизнь» колхозсем тырă турттарса пачĕç. Çапла Янăм ялсоветĕнчи колхозсем хатĕрлев пунктне икĕ кун хушшинче 93 лавпа 260 центнер тырă леçрĕç. Государство умĕнчи обязательствăна тултарчĕç.

К. АЛЕКСЕЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Планран ирттерсе

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Тăван Хĕрлĕ Çар воинĕсем Сталинград районĕнче тата Центральнăй фронтра тунă çĕнтерўсемпе хавхаланса, районри колхозсем государствăна тырă парассине вăйлатрĕç. Чылай колхозсем государствăна ялхуçалăх продукчĕсене планран ирттерсе параççĕ.

Декабрĕн 10-мĕшĕ тĕлне район государствăна тырă хатĕрлесе парас плана 94,2 процент тултарчĕ. Районри 34 колхозран 26-шĕ государство умĕнчи пур парăмсене те планпа пăхнинчен ытларах парса татнă. Пренешри «Большевик» колхоз государствăна планпа 218 центнер тырă памалла пулсан, вăл 222 центнер пачĕ, Тукас ялсоветĕнчи «Комбайн» колхоз та планран ирттерсе 42 центнер тырă леçрĕ.

Анчах районри 8 колхоз государствăна тырă парас ĕçе вăрăма чăсса пыраççĕ. «Самолет» колхоз 830 центнертан 540 центнер çеç леçнĕ, «Красный пахарь» колхоз государствăна тырă парас тĕлĕшпе яланах кайра тынă, кăçал та юлса пырать. Колхоз государствăна 424 центнер тырă памалла, паянхи куна пурĕ те 84 центнер çеç панă.

Фронтовиксен ачисене пулăшаççĕ

ШĂХАСАН. Районри ĕççыннисем фронтовиксемпе фронт çывăхĕнчи районсенчен эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсен ачисемшĕн тăванла тăрăшаççĕ. «Канаш» колхоз фронтовик ачисен столовăйĕ валли 2 тонна ытла çăнăх, 11 тонна çĕрулми, 6 центнер купăста уйăрса панă. Столовăйне Чулкăмакари туллимар вăтам шкулта организациленĕ. Унта фронтовиксемпе эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсен 52 ачи апатланать.

В. ЯКОВЛЕВ.

Стахановецсем комсомола кереççĕ

КАЛИНИНО. Уйкас Юнтапари «Новая жизнь» колхозри комсомолецсем Сталин юлташăн историллĕ докладне союзра тăман çамрăксем патне çитерне. Çакăн хыççăн колхозри 6 çамрăк комсомол ретне кĕчĕç.

Б. ШОРНИКОВ.

Ют çĕршывсенче

Германин генеральнăй штабĕн начальникне Гальдера вырăнтан кăларнă

Генштабăн начальникĕ вырăнне гестапона çывăх тăракан Цейтцлер генерала лартнă

ЖЕНЕВА, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинра официальнăй йĕркепе çакăн çинчен пĕлтернĕ: Германи çарĕн генеральнăй штабĕн начальникĕ пулма Гальдер генерал вырăнне Цейтцлер генерала лартнă. Пĕлекен çынсем каланă тăрăх, Гальдера вырăнтан кăларса ун вырăнне Цейтцлера лартнăранпа икĕ уйăха яхăн иртнĕ ĕнтĕ, анчах та Гитлер юлашки кунсенченех çавăн çинчен пĕлтермесĕр тăнă. Гальдера ăна Германин 1942 çулхи кампанири стратеги планĕсем пăчланса ларнига вырăнтан кăларнă, çавăн пекех пĕр çул каялла Браухич отставкăна тухни те 1941 çулхи кампани пăчланса ларнине кăтартса паначчĕ. Пĕлтĕр Гитлер Браухича парнене кўчĕ, анчах вăл ун чухне Гальдера уптраса хăварчĕ. Кăçал унăн е хăйĕн çара ертсе пырас ĕçрен пăрăнмалла пулнă, е Гальдера отставкăна кăлармалла пулнă. Гитлер вара Гальдера парнене кўме шут тытнă, хăй панă плансем пăчланса ларнăшăн ответлăха Гальдер çине йăвантарнă.

Генеральнăй штабăн çĕнĕ начальникĕ Цейтцлер гестапопа СС войскисен начальникĕ Гиммлер уйрăмах хытă пулăшса тăракан генералсен шутне кĕрет. Ăна генштаб начальникĕ тунипе çынсем Гитлер Германи çарĕн командной составне гестапо контрольлесе тăрассине вăйлатасшăн пулнине çыхăнтараççĕ.

Америка авиацийĕ Неапольпе Турина тапăннин результачĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат çакна палăртать: Америка бомбардировщикĕсем нумаях пулмасть Неаполе тапăнни союзниксем Вăтаçĕр тинĕсре çĕнĕ çитĕнўсем тунине кăтартать. Неаполе сывлăшран 6 уйăх хушшинче пĕр хут та тапăнманччĕ, англичансем Çурçĕр Африкăри аэродромсене хăйсен аллине иличченех çавăн пек пулнă. Неаполь вăл— Италин чи пысăк портĕсенчен пĕри, вăл — Итали тинĕс-çар флочĕн базиСоюзниксен войскисем Францин Çурçĕр Африкине пырса кĕнине пула Муссолинин хăйĕн флочĕн тĕп вăйĕсене Таранторан Неаполе куçармалла пулса тăнă, çавна Англипе Америка войскисене Италие пырса кĕме кансĕрлĕс тесе тунă. Неаполь çине нумай вăхăт хушши тата тăтăшах бомбăсем пыра-пыра пăрахни Италин Вăтаçĕр тинĕсри çулĕсене сиенлеме та та унта союзниксем контрольлесе тăрассине ўстерме май памалла. Самолетсемпе разведка туни çакна кăтартса панă: Неаполь гаванĕнче сиенленнĕ 2 крейсер тата пĕр линкор пур, Портри сооруженисем те хытă сиенленнĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи авиацийĕ декабрĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Турина тапăннă, чухне хулара 30 тĕлте вăйлă пушар тухнă. Хулана тапăнни 55 минута пынă. Англи самолечĕсем фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем нумай пăрахнă.

Халăх Итали хулисенчен пĕр йĕркесĕр тарать

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Дэйли мейл» хаçат çапла пĕлтерет: Миланран 400 пин çынна ытти çĕре куçарнă ĕнтĕ.

Декабрĕн 15-мĕшĕнче шкулсем пурте хупăнаççĕ. Муссолини декабрĕн 8-мĕшĕнче алă пусса декрет кăларнă. Ăна бомбăсем пăрахакан районсенчен халăх хăраса ўксе пĕр йĕркесĕр тарнине чарса лартас тесе кăларнă, мĕншĕн тесен халăх çапла тарни пĕтĕм çĕршыври промышленноçăн ĕçне чарса лартма пултарать.

Миланран темиçе пин çын тарнине курнă çынсем каланă тăрăх, халăх çапла тарнине пăхма питĕ хăрушă пулнă. Тарнă чухнэ темĕнле транспортпа та усă курнă: тачкăсемпе те, лаша кўлнĕ автомобильсемпе те тата ыттисемпе те. Тарнă çынсен асапĕсем пысăк сивĕсене пула пушшех ўссе кайнă.

ЖЕНЕВА, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта килнĕ хыпарсем тăрăх, Италин Çурçĕр хĕвелтухăç пайĕнче тăракан Бриндизи тата Бари хулисенчен (вĕсем — портлă хуласем) граждан халăхне ытти çĕре куçарма тытăннă.

Иден Çурçĕр Африкăри ĕçсем çинчен калани

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рэйтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палатин лидерĕ Иден правительствăн Дарлан çинчен калас сăмахне палатăн хупă ларăвĕнче итлеме кирлĕ çинчен тепĕр хут каланă. Палатăра нумайĕшĕ Идена çав ыйту тăрăх заявлени тутарасшăн пулнă. Çавсене ответлесе, Иден çапла каланă: «США президенчĕн заявленийĕнче тата эпĕ общинăсен палатинче тунă заявленире общественноçăн шухăшлăмăлне шута илнĕ. Пурин умĕнче те заявлени тăвăп тесе сăмах пама пултараймастăп эпĕ», тенĕ Иден.

Унтан Çурçĕр Африкăри ĕçсем çинчен, çав шутра Дарлан çинчен те, сўтсе-явмашкăн общинăсен палатин хупă ларăвне тунă.

Черчилль пренисенче чи малтан тухса калать, тесе пĕлтернĕ.

ÇУРÇĔР АФРИКĂРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка войскисем Тебурда секторĕнче каллех малалла куçнă, унта вĕсем противника пысăк çухатусем тўстернĕ. Противник çапăçу хирĕнче хăйĕн 400 виллине хăварса, каялла чакнă. Англипе Америка авиацийĕ активлăнрах та активлăнрах кĕрешет. Çурçĕр Африкăри аэродромсенче истребительсемпе бомбардировщиксем нумай пухса тăратнă ĕнтĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Эль-Агейла районĕнче лару-тăру сивĕчленсе пырать. Англи авиацийĕ çапăçу районĕнче активлăн кĕрешет. Вăл ĕнер противникăн транспортне, батарейисене тата лагерĕсене атакăланă.

ФРАНЦИН ÇУРÇĔР АФРИКИН ГЕНЕРАЛ-ГУБЕРНАТОРĔ КАЛАНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Рабатран пĕлтернĕ тăрăх, Францин Çурçĕр Африкин генерал-губернаторĕ Буассон çапла каланă: Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсенчен çар материалĕсемпе çар хатĕрĕсем килсе çитсенех Дакарпа Францин пĕтĕм Африки Германие хирĕç вăрçа хутшăнма шухăшлаççĕ, тенĕ.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Гона хулине (Çĕнĕ Гвинея) пĕтĕмпех Япони войскисенчен тасатнă. Японецсем Буна секторĕнче контратакăсем тума хăтланни ăнăçман.

Бунăна осада тума тытăннăранпа (ноябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа) Çĕнĕ Гвинея çинче японецсен 100 самолетне персе ўкернĕ тата çĕр çинче 27 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Çав районра çапăçусем питĕ хаярран пулса пыраççĕ. Американецсем метр хыççăн метр малалла куçса пыраççĕ.

ÇĔНĔ ГВИНЕЙĂРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен самолечĕсем 5-мĕш колоннăна арпаштарса янă. Японецсем Çĕнĕ Гвинея районне десант антарнă. Японин ертсе пыракан эсминецне икĕ бомба тĕл пырса лексенех Японин 6 эсминецĕ каялла çавăрăнса кайнă. Япони войскисен контратаки ăнăçман. Вĕсем пысăк çухатусем тўснĕ. Союзниксен самолечĕсем Лаэне, Гасматăна тата Рабаула тапăннă.

ЯПОНИН ТИНĔСРИ ÇУХАТĂВĔСЕМ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 11-мĕшĕ. Çурçĕр Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен тинĕс-çар министрĕ пичет представителĕсене çапла каласа панă: пирĕн алăри даннăйсем тăрăх, Японин суту-илў флочĕ 1 миллион тоннăран пуçласа 1,5 миллион тонна таран пĕтнĕ. Японин суту-илў флочĕ мĕнпурĕ 6 миллион тоннăлăх пулнă. (ТАСС).

Халăхăн ирĕклĕ укçи-тенкипе тăшмана çĕнтерес çĕрте усă курар

Çак çулхи декабрь уйăхĕнче Совет Союзĕнчи государственнăй перекет кассисем ĕçлеме пуçланăранпа 20 çул тулать. Çирĕм çул хушшинче вĕсем кредит ĕçĕн хăватлă учрежденийĕсем пулса тăчĕç. Вĕсем нумай миллионлă совет халăхĕн ытлашши укçи-тенкине перекетлесе усраççĕ.

Вкладчиксен шутĕнче хальхи вăхăтра 17 миллион ытла çын тăрать. Вĕсем хăйсен счечĕсем çинче 7 миллиард тенкĕ ытла укçа тытаççĕ. Çакă вăл перекет кассисем совет çыннисен йăлине кĕни çинчен калать. Пирĕн ĕççыннисем хăйсен ытлашши укçи-тенкине перекет кассинче тытма хăнăхрĕç. Пĕр çул хушшинче перекет кассисем укçа-тенкĕпе хаклă япаласен 195 миллион операцине туса ирттернĕ. Перекет кассисен çак çулхи пĕтĕмĕшлĕ çаврăнăшĕ 270 миллиард тенкĕрен те иртет.

Пирĕн Чăваш республикинчи перекет кассисем те пысăк ĕç тăваççĕ. Республикăра вкладчиксен хисепĕнче 50 пин çынна яхăн тăрать. Вĕсем перекет кассисенче хăйсен укçийĕсене 11 миллион тенкĕ ытла тытаççĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă финанс аппарачĕсем умне çĕнĕ задачăсем кăларса тăратрĕ. Вăрçă перекет кассисен ĕçне те чылай енĕпе урăхлатрĕ.

Вăрçă пуçланнă хыççăн перекет кассинчен вкладсем илессине вăхăтлăха чакарчĕç. Вкладчик уйăх хушшинче хăйĕн перекет кĕнекипе 200 тенкĕрен ытла илме пултараймасть. Калас пулать, çакă çĕнĕ йĕркене вкладчиксенчен чылайĕшĕсем тивĕçлипе ăнланса иличĕç. Чылай вкладчиксем перекет кассисенче укçа нумай тытаççĕ пулин те, вăрçă пуçланнăранпа вĕсене илес тесе пĕрре те пырса ыйтмаççĕ. Вĕсем хăйсен ытлашши укçийĕпе совет государствине пулăшассине хăйсен тивĕçĕ тесе шутлаççĕ. Теприсем тата укçана çавăн пек сыхлани хăйсемшĕн те шанчăклă та усăллă тесе шутлаççĕ.

Вкладчиксене уйăхсерен тавармалли укçа суммине 200 тенкĕ хăварнă пулин те, çĕнĕрен çĕнĕ ĕççыннисем хăйсэн укçисене темиçе пиншерĕн перекет кассисене хураççĕ. Иртнĕ уйăхсенче перекет кассисене республикипе 5.796.000 тенкĕ хывнă. Пĕр ноябрь уйăхĕнче кăна Вăрнар районĕнче 12.000 тенкĕ, Октябрьски районра 16.000 тенкĕ, Чкаловски районра 10.000 тенкĕ, Шупашкар хулинче 112.000 тенкĕ укçа хывнă.

1941 çулхи июнĕн 23-мĕшĕ хыççăн хунă вкладсене ĕççыннисене чакармасăр тата кирек мĕнле суммăпа та параççĕ. Çак йĕрке ĕçхалăхĕн ытлашши укçи-тенкине перекет кассисенче нумайшарăн тытма пулăшрĕ.

СССР Совнаркомĕн 1942 çулхи августăн 10-мĕшĕнчи постановленине тĕпе хурса, перекет кассисэм ĕççыннисенчен выляв вклачĕсене те йышăнма пуçларĕç. Çакăн пек вкладсене уйрăм граждансен ячĕпэ кăна йышăнаççĕ. Кашни гражданин темиçе перекет кассине тата темиçе счет тăрăх та выляв вклачĕсене хума пултарать. Çавăн пек хунă вкладсэн суммийĕ кашни счет пуçне 5.000 тенкĕрен пуçласа 10.000 тенкĕ таран пулма пултарать.

Выляв вклачĕсене перекет кассинче тытакан çынсем процэнтлă вкладсене тытакансен пур прависемпе те усă кураççĕ. Выляв вклачĕсен тупăшĕсене выляв йĕркипе тўлесе тăраççĕ. Вылявăн малтанхи тиражĕ Шупашкарта 1943 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче пулса иртэт.

Правительствăн çўлерех асăннă постановленине пĕлтернĕ хыççăн, пирĕн республикăри пур перекет кассисем те выляв вклачĕсэне йышăнма тытăнчĕç. Йышăнма пуçланă малтанхи кунхинех — октябрĕн 15-мĕшĕнче — Куславкка районĕнчи перекет кассисене 12 выляв вклачĕ хунă. Декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне кунти перекет кассисем çак тĕлĕшпе пурĕ 32 вкладчик тытаççĕ ĕнтĕ. Чкаловски районра вара выляв вклачĕсем тăрăх уçнă счетсен хисепĕ вăтăртан иртет.

Перекет кассисем выляв вклачĕсем енĕпе те операцисем туса ирттерни ĕççыннисене вĕсенче укçа-тенкĕ тытма хавхалантарать.

Колхозниксем укçа-тенкĕрен пуянни ялсенче вкладчиксэн йышне нумайăн ўстерме май парать. Анчах ялсенчи перекет кассисем пурте çакна туйса ĕçлемеççĕ-ха. Хăшпĕр перекет кассисем колхозниксемпе пĕрлех, рабочисемпе служащисене те вкладчиксен ретне явăçтарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Нимĕç фашисчĕсем пуçласа янă вăрçă пысăк тăкаксем кўнине кашни совет ĕççыннийĕ лайăх ăнланать. Тăшмана хăвăртрах аркатса тăкас тесен, пирĕн Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота танксем, самолетсем, тупăсем, снарядсем ытларах та ытларах туса парас пулать, фронт ыйтнине пĕтĕмĕшпех тивĕçтерес пулать. Тăван çĕршыва вĕçĕ-хĕррисĕр юратнăран пирĕн ĕççыннисем фронта пур енĕпе те пулăшма тăрăшаççĕ. Оборона фондне туни, танксен колоннисемпе самолетсэн эскадрильисене тума укçа-тенкĕ пухни, Хĕрлĕ Çар боецĕсене ăшă тумтирсем илсе хатĕрлесе пани — çаксем ĕнтĕ ĕççыннисем фронта пулăшнин лайăх тĕслĕхĕсем пулса тăраççĕ.

Ĕççыннисем çулталăк ытла ĕнтĕ хăйсэн ирĕкĕпе оборона фондне укçа-тенкĕпе хаклă япаласем хывса тăраççĕ. Çак фонда Чăваш республикинчи ĕççыннисем укçан тата заем облигацийĕсемпе пурĕ 7 миллион тенкĕ ытла хывнă. Вăл шутран заем облигацийĕсене Шупашкарти ĕççыннисем 1.367.000 тенкĕлĕх, Пăрачкав районĕнчи колхозниксемпе служащисем 594.000 тенкĕлĕх хывнă. Пирĕн халăх хăйĕн тăван çĕршывне юратни кăçалхи заем кампанийĕ уйрăмах ăнăçлăн иртнинче палăрчĕ. Заема пысăк ăнăçлăхпа вырнаçтарнă вăхăтрах, ялсенчэ унăн укçине пухас ĕç анлăн сарăлса кайрĕ. Колхозниксем заем укçине срокчен тўлеççĕ. 1942 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурĕ 19 районри колхозниксем заем укçине пĕтĕмпех тўлесе татрĕç. Чылай районсенче заем облигацийĕсене укçан сутассине организациленĕ. Пăрачкав районĕнче заем облигацийĕсене çавăн пек майпа 150.000 тенкĕлĕх, Куюакино районĕнче 75.000 тенкĕлĕх сутнă.

Анчах хăшпĕр районсенчи перекет кассисем юлашки вăхăтра колхозниксем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне сўрĕклетрĕç. Комсодсен ĕçне организацилесе ертсе пымаççĕ. Çавна пула Çĕмĕрле, Улатăр тата Канаш районĕсенче ĕçе çĕнĕрен пырса кĕнĕ рабочисемпе служащисене заем çырăнтармасăр хăварнă. Заем çырăнса илес ĕç тулашне юлнă çынсен хисепĕ Çĕмĕрле районĕнче, сăмахран, пĕр пине çитет.

Рабочисемпе служащисем хăйсэн отпускĕсемпе усă курманшăн вклачĕсене ятарласа перекет кассисене куçарасси тэ республикăра питĕ начар пулса пырать. Финанс органĕсемпе перекет кассисен задачи 1943 çулччен заем укçисене колхозниксенчен пур районсенче те пуçтарса çитересси, вкладчиксен хисепне ўстересси, çапла майпа çĕршыв оборонин нушийĕ валли пысăк средствăсем парасси пулса тăрать. Ĕççыннисем перекет кассисене хунă укçапа усал тăшмана—нимĕç фашизмне çĕмĕрсе тăкас ĕçре усă курасси çинчен агитаторсен ĕççыннисене тĕплĕн ăнлантарса памалла.

А. МИХАЙЛОВ,
ЧАССР Перекет кассисемпе Госкредит Управлени начальникĕн заместителĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Наркомсобес Чувашской АССР доводит до сведения инвалидов отечественной войны о том, что выездная бригада Канашской протезной мастерской будет работать в г. Чебоксарах в 1—2, в гор. Алатыре 15—16 числах каждого месяца и в гор. Канаше ежедневно, кроме выходных дней.

Все нуждающиеся в протезах инвалиды должны получить наряды на протезы от Райсобесов.

НАРКОМСОБЕС.

Сюктерскому д/о заводу требуются главный бухгалтер, бухгалтера.

Жилплощадь предоставляется, имеется столовая.

С предложением обращаться: г. Чебоксары, ул. Ленина, 64, к главному бухгалтеру.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11629 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 5С 84 п.